# Çĕнĕ 2016 çул ячĕпе саламлатпăр!

ХЫПАР

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

52 (849) №, 2015, раштав/декабрь, 31 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/раштав уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне/

**ПАХЧАÇИМĔÇ**

| *Килограмм* | *тенкĕ* |
|---|---|
| Çĕрулми | 15 |
| Купăста | 18 |
| Сухан | 25 |
| Кишĕр | 30 |
| Ыхра | 200-220 |
| Хăяр | 80-120 |
| Кавăн | 30 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25 |
| Помидор | 60-120 |
| Пылак пăрăç | 80-150 |
| Тăварланă хăяр | 130 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100-120 |

**УЛМА-ÇЫРЛА**

| | |
|---|---|
| Панулми | 50-100 |
| Исĕм çырли | 60-100 |
| Апельсин | 60-100 |
| Лимон | 110-140 |
| Банан | 60-70 |
| Мандарин | 60-100 |
| Груша | 70-120 |
| Гранат | 150-180 |
| Хурма | 55-90 |
| Сырлан /облепиха/ | 200 |
| Кĕтмĕл çырли | 160 |
| Шур çырли | 160 |

**ÇĂНĂХ-КĔРПЕ**

| | |
|---|---|
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 35 |
| Хуратул -»- | 64-66 |
| Тулă -»- | 32 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 59 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 46-50 |
| Пыл | 350-450 |

**АШ-КАКАЙ**

| | |
|---|---|
| Ĕне ашĕ | 200-380 |
| Сысна ашĕ | 200-380 |
| Сурăх ашĕ | 180-300 |
| Пĕвер | 150-200 |
| Чăх | 250 |
| Хур | 350-400 |
| Кăвакал | 350-400 |
| Кăркка | 400 |
| Кролик | 350 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 50-72 |

**ПУЛĂ**

| | |
|---|---|
| Шăнтнă скумбри | 200 |
| -»- сельдь | 180 |
| Мойва | 150 |
| Треска | 250 |
| Горбуша | 280 |
| Шăла пулă /судак/ | 280 |
| Çупах /лещ/ | 100 |
| Карп | 230 |
| Çуйăн /сом/ | 220 |
| Шампа /налим/ | 250 |

**СĔТ-ТУРĂХ**

| | |
|---|---|
| Сĕт /литр/ | 35-40 |
| Хăйма | 220 |
| Тăпăрч | 200-220 |
| Сыр | 350 |
| Услам çу | 220 |




## Уяв тесен...

**Çĕнĕ çула уявласа кĕтсе илес йăла авалах пулнă. Кашни халăхăнах пур вăл. Çĕнĕ çулĕ те кашни халăхăн хăйĕн вăхăтĕнче пуçланнă. Хăшĕн авăн уйăхĕнче, хăшĕн ака уйăхĕнче. Тĕрĕссипе халĕ те хăш-пĕр халăх Çĕнĕ çула лăп та шăп раштавăн 31-мĕшĕнче кĕтсе илмест. Эпир январьтен Упăте çулне кĕме хатĕрленетпĕр, ăна еплерех капăрланса юрама пулать-ши тесе пуçа вататпăр пулсан, Китайра, шăпах чĕрчун календарĕн хуçи пулсан та, Упăте кăрлачăн 1-мĕшĕнчех килме шухăшламасть иккен. Унта çĕнĕ çула хĕлле, кун тавăрăннă хыççăн /раштав, 22/ уйăх иртсен, çĕнĕ уйăх /уйăх календарĕпе/ пулсан палăртаççĕ. Кăçал вăл Китайра нарăсăн 8-мĕшĕнче килет.**

Апла-и, капла-и, Раççейре вара Çĕнĕ çула шăпах 31-мĕшĕнче çĕрле, Кремль куранчĕсем 12 çапнă майăн шампань эрехне шаплаттарса уçса кĕтсе илме хăнăхнă. Хайхи Китай календарĕ Раççей çыннисемшĕн тăван календарь пекех туйăнать ĕнтĕ. Çĕленĕ-аçтахи те пач ют мар. Календарьти чĕрчунĕсем пĕрин хыççăн тепри йĕркипех ылмашăнаççĕ-ха, анчах чĕрчунĕсен тĕсĕсем-характерĕсем улшăнса пыраççĕ иккен. Кăçалхи качака çулĕ йывăçран тата кăвакчĕ, килекен упăти вара çулăмлă тет, çулăм тĕслĕ, ахăртнех. Çав упăтене юрама тăрăшмалла та вара пирĕн, этемсен. Килекен упăти ай-вай лăпкă мар – курнăçскер тет. Упăте ахаль те курнăç чĕрчун-ха. Ахальтен мар чăваш мыскараланакана «упăте пек» тет. Юрама тăрăшăн унта: 366 кун упăте хуçаланмалла та пирĕнпе. Çулталăкĕ те пĕр кун вăрăмрах – **2016 çул високоснăй пулать.**

**Упăте мыскара юрататъ терĕмĕр. Эппин уява та маскарад сĕмĕ кĕртмеллех.** Упăте хăйне хисепленине кура çитес çул кĕтмен-туман çĕртен «сюрпризпа» савăнтарма пултарĕ. Тахçантанпах киле-çурта капăрлатманччĕ-и? Тархасшăн. Уяв тĕлне мишура, гирлянда, ытти йăлтăр-ялтăр шăпах меллĕ. Упăтешĕн вĕсем ытлашши пулас çук. Илемлетмешкĕн чи юрăхлă тĕссем хĕрлĕ, хĕрхĕлтĕм /çулăм тĕслĕ/ ылтăн, сарă, фиолет, кĕрен тĕссем. Хура тата сенкер-кăвак тĕссене темшĕн кăмăлламасть-мĕн килекен упăте. Шута илĕпĕр. Капăрлатнă чухне çурта джунглинех çавăрма юрать. Унта та кунта мишура-серпантин лиана евĕр явăнса-çакланса тăтăр – упăте савăнĕ. Анчах çак чĕрчун йĕркесĕрлĕхе юратмасть, вăл ăслă-çке. Арпашăнасран асăрханать-тĕр. Ăна «халтурăпа» улталаймăн, эппин çурта тимлесех илемлетмелле.

Çулталăк хутлăхĕ /стихия/ çулăм пулнине кура гирлянда çутма манас марччĕ. Илемлĕ çуртасем чĕртсен те лайăх – хăрушсăрлăха пăхăнмалла çеç.

**Сĕтел çинче упăте юратакан çимĕçсене пысăк вазăпах лартмалла. Банан-мандарин-ананас...** Ара, пурпĕрех хамăрах аванах çиетпĕр-иç, пăсăлса каймĕ, упăте те кăмăллă пулĕ. Тутлă çимĕçсене йăлтăркка хутпа чĕркесе чăрăш çине çаксассăн упăтене пальма çинчен банан татса çинĕнех туйăнĕ. Чăрăш йĕппи чикет те-ха... Укça та юрататъ-мĕн вăл, чăрăш çине хăюпа илемлетсе çакса тухăр. Çухалсассăн та тем мар – упăте кĕсйине илсе чикнĕ...

Упăте улма-çырла çеç мар, аш-пăшне те тиркемест. Эппин уяв сĕтелĕ валли нимĕнле чару та çук. Оливье, ăшаланă чăх, пăшăхланă çуйăн – тархасшăн. Тĕрлĕ салат, кукăль-пӳремеч рецепчĕсене халĕ таçта та тупма пулать. Пĕçерме ан ӳркен тата кĕсйӳ хулăнрах пултăр. Лавккара çичĕ тинĕс леш енчи çиме-ĕçме темĕн чухлех.

**Çипуçа вара упăте капăррине хаклать. Хĕрарăмсене – уяв кĕпи!** Ĕç стилĕ – костюм – пирки ан та шухăшлăр. Арçынсене те хайхи çав экстравагантнăç тени чăрмантармĕ. Вылянчăклăх, капăрлăх, асамлăх. Чи кирли вара – хаваслăх. Тус-тăванпа çĕнĕ çула кĕретĕр е çемьепе – пурпĕрех. Тĕрлĕ вăйă-конкурс ытлашши мар.

Туссемпе е тăвансемпе пĕрле Çĕнĕ çула кĕтсе илетĕр пулсан вĕсем валли пĕчĕкçĕ парнесем хатĕрлесен аван.

Асăннă сĕнӳсемпе килĕшӳллĕн, упăтене уяса Çĕнĕ çула кĕтсе илсен килес çулта ырлăхĕ-савăнăçĕ пулмаллах. Хаваслă та çĕкленӳллĕ кăмăлпа, пĕр-пĕрне ырлăх-сывлăх сунса çĕнĕ çула кĕрсен ăнăçусем пулĕç-ха. Çĕнĕ çул ячĕпе!

### Чăхпа ананас салачĕ

**6 çын валли кирлĕ: чăхăн шурă какайĕ, 3 çăмарта, консервланă ананас 300 г, консервланă кукурус 1 банка, сыр 100-150 г, майонез, тăвар, пăрăç тутине кура.**

Чăх ăмрине шывра тăвар, пăрăç ярса пĕçеретпĕр, бульонран кăлармасăр сивĕтетпĕр. Виçĕ пĕçернĕ çăмартана, сыра тăваткалласа туратпăр, ананаса, чăх какайне те тăваткалласа туратпăр, куккуруса уçатпăр та пысăк савăта пĕтĕм япаласене ярса хутăштаратпăр. Тăвар, пăрăç, майонез хушатпăр, тĕплĕн хутăштаратпăр та салат савăчĕ çине хуратпăр, çиелтен «чăрăшпа» /укроп/ е ытти ешĕл çимĕçпе илемлететпĕр, сĕтел çине лартиччен çур сехет холодильникра тытатпăр.



## Ăнтăлупа – малалла

Хăвăрт çӳрекен пуйăс пек тепĕр çул вашлатса иртсе кайрĕ. Хаçатăн кăçалхи, çĕнĕ çул умĕнхи, юлашки номерне калăплатпăр. Кĕçех каллех çĕнĕ çавра пуçланать. Умра 2016 çул. Иртнине – 2015 çула пĕтĕмлетмелли, çĕнĕ çулта тумаллине палăртмалли тапхăр вăл – çулталăк вĕçĕ.

Мĕнпе асра юлчĕ-ха иртсе каякан çул тăван халăхăмăршăн? Кăçал республика пуçлăхне суйларăмăр. М.В.Игнатьева республикăна ертсе пыма иккĕмĕш тапхăра шантăмăр. Çавăн пекех район, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене те çĕнĕрен суйларăмăр.

Кашнин хăйĕн савăнăçĕ, ăраскалĕ, пăшăрханăвĕ. Шăпах харпăр пурнăçăмăрти телейхумханупа çыхăнтарса хаклатпăр та çулталăка. 2015 çулта пĕрле пултăмăр, вулаканăм. Малашне те пĕрле пуласчĕ, ыррине ытларах тăвасчĕ. «Пĕрлĕхре – вăй» тет чăваш, тата «хуйха-суйха тусупа пайласан вăл çурри пĕчĕкленет, савăнăçа пайласан – икĕ хут ӳсет» тесе те ахальтен каламан-тăр.

«Кил-çурт, хушма хуçалăх» хаçата çырăнса илекенсем йышлă пулни ăна тата та пуянрах, кирлĕрех тумашкăн тăрăшма хистет. Шăпах вулаканăн ыйтăвĕсемпе сĕнĕвĕсене тĕпе хурса йĕркелĕпĕр те хаçата. Канăçсăрлантаракан ыйтăва пĕрле сӳтсе явма, сĕнӳсем пама, кирлĕ пулсан специалистпа канашласа тупсăмне тупма, вулакан патне çитерме малашне те тăрăшăпăр.

Çĕнĕ 2016 çула ĕмĕтпе кĕме, ăнтăлупа пурăнма, тĕллевсем патне çирĕппĕн утма ырлăхсывлăх, вăй-хал, ăнăçупа ăнтăлу, юрату сунатăп Сана, хаклă вулаканăм. Пурнăçра пулса иртекен çĕнĕлĕхсемпе, улшăнусемпе кăсăкланма ан пăрахăр. «Кил-çурт, хушма хуçалăх» сирĕн кил-çуртăра тĕревлемешкĕн ыйтуканашпа пулăшма яланах хапăл. Çĕнĕ 2016 çул ячĕпе, вулаканăм!

**Эльвира ИВАНОВА, «Кил-çурт, хушма хуçалăх» редакторĕ.**